Министерство просвещения Российской Федерации

Министерство просвещения Чувашской Республики

Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение

«Долгоостровская средняя общеобразовательная школа»

Батыревского муниципального округа Чувашской Республики

РАССМОТРЕНО

Педсоветом

________________________

Хамдеева Р.Х.

Протокол №1 от «21» августа 2023 г.

МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ " ДОЛГООСТРОВСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА" БАТЫРЕВСКОГО МУНИЦИПАЛЬНОГО ОКРУГА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Подписан: МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ "ДОЛГООСТРОВСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА" БАТЫРЕВСКОГО МУНИЦИПАЛЬНОГО ОКРУГА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
DN: C=RU, S=Чувашская Республика - Чувашия, STREET="429372, Чувашская Республика - Чувашия, Батыревский район, деревня Долгий Остров, Школьная ул., д.3", L=с. Батырево, T=директор, O="МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ ""ДОЛГООСТРОВСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА"" БАТЫРЕВСКОГО МУНИЦИПАЛЬНОГО ОКРУГА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ", ОГРН=1032132002418, СНИЛС=02244585734, ИНН ЮЛ=2103005759, ИНН=210300283827, E=obrazov2-batyr@cap.ru, G=Дамир Минсеитович, SN=Бурчаклы, CN=" МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ "" ДОЛГООСТРОВСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА"" БАТЫРЕВСКОГО МУНИЦИПАЛЬНОГО ОКРУГА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ"
Основание: Я являюсь автором этого документа
Местоположение: место подписания
Дата: 2023-11-08 13:23:18
Foxit Reader Версия: 9.7.2

УТВЕРЖДЕНО

Директором школы

________________________

Бурчаклы Д.М.

Приказ №140/2-р от «21» августа 2023 г.

# Программа кружка «Хунав»

## 5-9 классы

Разработала: учителя чувашского языка и литературы

Кулакова Светлана Пантелеймоновна

д.Долгий Остров 2023 г.

## *Ачасен творчествăлла шухăшлавне аталантарас тĕллевпе йеркеленĕ „Хунав“ кружок программи.*

***Кружок тĕллевĕсем:***

1) ачасен творчествăллă шухăшлавне аталантарасси;
2) чĕлхе хăй евĕрлĕхне ăнланма пулăшасси, унăн вăрттăнлăхĕсене уçма хăнăхтарасси;
3) хайлавсенчи ĕç йĕркине курма вĕрентессси;
4) лирика хайлавĕн тĕсне, тытăмне, виçине палăртма вĕрентесси;
5) сăвă чĕлхин уйрăмлăхĕсене уйăрса илме хăнăхтарасси;
6) сăвă çырас ăсталăха алла илме пулăшасси;
7) пуплев фигурисене курма вĕрентесси;
8) сăнарлă чĕлхе мелĕсемпе вырăнлă усă курма хăнăхтарасси.

***Вĕренӳ планĕ 37 сехетрен тăрать:***

– лекцисем (21 сех.)
– практика занятийĕсем (12 сех.)
– консультаци (1 сех.)
– зачет (1 сех.)

Вĕренӳпе тематика планĕнче кашни темăпа вĕренмелли сехет шутне, тумалли хăнăхтарусемпе ĕçсене, урок тĕсĕсене, ачасен мĕн пĕлмеллине кăтартрăм.

***Ĕç мелĕсем***: тишкересси, ушкăнпа сӳтсе явни, хайлавсене илемлĕ те палăртуллă вулани, текстсене тишкерсе рецензилесси, сăвă çырасси.

Вĕренӳпе тематика планĕ

| Тема | Сехет шучĕ | Календарь срокĕ | Теори ыйтăвĕ | Хăнăхтарусемпе ĕçсем | Ачасен пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕ |
|---|---|---|---|---|---|
| 1. Сăмах пултăр уçăмлă, шухăш пултăр витĕмлĕ | 1 сех. | | Илемлĕ пуплев. Чĕлхене илемлетекен мелсем. (тропсем) | Хайлава тишкерни. Илемлĕх мелĕсене тупни | Илемлĕх мелĕсемпе усă курма вĕренесси. Тропсене хайлавсенче тупасси |
| 2. Практика ĕçĕ | 1 сех. | | Илемлĕх мелĕсене (метафора, синекдоха…) аса илсе çиреплетни. | Хăйсен ĕçĕсенче илемлĕх мелĕсемпе усă курни | Илемлĕх мелĕсемпе уса курма хăнăхасси. |
| 3,4 Поэзи чĕлхи | 2 сех. | | Сăвă виçисем ( ямб, хорей …) | Сăвăсене тишкерни | Сăвă виçисене уйăрса илме пĕлмелле. |
| 5,6 Пуплев фигурисем. | 2 сех. | | Анафора, антитеза, параллелизм т. ыт. | Сăвăсенче пуплев фигурисене тупни | Пуплев фигурисемпе сăвăсенче усă курасси |
| 7.Сасă вылявĕ. | 1 сех. | | Аллитерации, ассонанс. | Сасă вылявне | Сасă вылявĕпе |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | | | сăвăсенче тупни. | сăвăсенче усă курма хăнăхасси |
| 8,9 Сăвă çырас ăсталăх. | 2 сех. | | Сăвă виçисене аса илесси | Сăвă çырни. | Илемлĕх мелĕсемпе усă курса рифмăпа ритма (сăвă чĕлхине ) тытса пыма хăнăхтарасси. Сăвă çырма вĕрентесси |
| 10 Лит-ра геройĕ. | 1 сех. | | Сăнар. Диалог, монолог. | Хайлаври сăнарпа ĕçлени | Литература геройне сăнласа пама вĕренесси |
| 11 Лирика тĕсĕсем | 1 сех. | | Гражданла лирика, пейзаж л., юрату л…. | Хайлавпа ĕçлени | Лирика тĕсне уйăрма хăнăхасси |
| 12,13 Практика ĕçĕ | 2 сех. | | Лирика тĕсĕсем. | Пĕр-пĕр лирика тĕсĕпе сăвă çырни. | Суйласа илнĕ лирика тĕсĕпе сăвă çырасси |
| 14. Поэзии каçĕ. | 1 сех. | | | Мастер-класс. Илемлĕ вулав. | Илемлĕ хайлав уйрăмлăхĕсене алла илесси. Палăртуллă вуласси. |
| 15 Пуплев тĕрĕслĕхĕ. | 1 сех. | | Чĕлхе нормисем (орфоэпи, лексика, морфологи нормисем) | Шкул ачисен сочинени-йĕсене тишкерни | Йăнăшсене уйăрма хăнăхасси |
| 16 Кĕнеке стилĕ. | 1 сех. | | Стиль тĕсĕсем. Илемлĕ литература стилĕ | Текстпа ĕçлени. Стиль уйрăмлăхĕ-сене тупса палăртни | Уйăрса панă стильпе текст йĕркелесси |
| 17. Эпика, лирика, драма хайлавĕсем. | 1 сех. | | Эпика, лирика, драма, лиро-эпика | Текстпа ĕçлени | Эпика, лирика, драма хайлавĕсен тĕп уйрăмлăхĕсене пĕлесси |
| 18.Текст тĕсĕсем. | 1 сех. | | Сăнлав,калав, ăслав | Текстсене тишкерни | Текст тĕсĕсене уйăрса илесси |
| 19. Практика ĕçĕ | 1 сех. | | Сăнлав сочиненийĕ | Творчествăлл ă ĕç: сочинени çырни | Сăнлав сочиненийĕн уйрăмлăхĕсемпе паллашасси |
| 20. Ытарлă кулăш | 1 сех. | | Юмор, сатира, сарказм. | Пĕр- пĕр | Кулăш тĕсĕсене |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | | Аллегори. Юптару. | хайлава тишкерни | уйăрса илме пĕлесси |
| 21. Инсценировка | 1 сех. | | Сценари, инсценировка | Инсценировка çырни | Инсценир. çырма вĕренесси |
| 22. Пьеса | 1 сех. | | Пьеса, драма, комеди, трагеди | Драма хайлавĕн тытăмне тупса палăртни | Драма тытăмне курма пĕлесси, вĕсене уйăрса илме хăнăхасси |
| 23. Творчествăллă ĕç | 1 сех. | | Действи, акт, картина, явлени. | Пьеса çырса пăхни | Пьеса çырма пĕлесси |
| 24. Урок-экскурси | 1 сех. | | | Театрта спектакль пăхни | |
| 25. Сăнарлăх | 1 сех. | | Искусство тĕсĕсем | Илемлĕ сăмах ÿнерне тишкерни | Искусство тĕсĕсене пĕлесси |
| 26. Логика йăнăшĕсем. | 1 сех. | | Логика йăнăшĕ | Текст редакцилени. | Логика йăнăшĕсене тупма вĕренесси |
| 27. Сăмах пĕрекетлĕхĕ. | 1 сех. | | Пуш сăмахсем, ытлашши сăмахсем. | Йăнăшсемпе ĕçлени | Сăмах хакне туйма вĕренсе çитесси |
| 28. Вăйă-урок. | 1 сех. | | Ларма. | Хамăр пултару - лăха кăтартма тăрăшни. | Халăх йăли-йĕркине асра тытса ăша хывса хăварасси |
| 29. Поэзи пилĕкминутлăхĕ | 1 сех. | | | Мастер-класс. Сăвăсем янăраççĕ | Ачасен хăйсен сăввисене палăртуллă, илемлĕ вулама пĕлесси |
| 30. Творчествăллă ĕçсене хÿтĕлени. | 1 сех. | | Тема, идея, жанр, сăнар, хайлав тытăмĕ, сюжет. | Хăйсен хайлавĕсемпе паллаштарни | Çырнă хайлавсене хÿтĕлесси |
| 31. Рецензи. | 1 сех. | | Рецензи | Çын ĕçне хаклама вĕренни | Рецензи çырма пĕлесси |
| 32.-33 “Авангард” хаçатра хăнара | 1 сех. | | Публицистика жанрĕсем. | Хаçат-журнал жанрĕсемпе паллашни | Публицистика жанрĕсене алла илесси |
| 34. “Сăмахлăх вăл – самана сасси”. | 1 сех. | | Сăмах ÿнерĕ | Вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетни | Теори ыйтăвĕсене аса илсе çирĕплетесси |
| 35. Практика ĕçĕ Урок-пĕтĕмлетÿ | 1 сех. | | Публицистика жанрĕсем | “Хунав” кружокĕн хаçатне | Çырнă хайлавсене вырнаçтарса |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | | | пичете хатĕрлесе çитерни | кружок хаçатне кăларасси |

***Кружок программин содержанийĕ***

***1-мĕш тема. Сăмах пултăр уçăмлă, шухăш пултăр витĕмлĕ (1 сех.)***

Калаçнă-çырнă чухне хамăр шухăшсене тĕрĕс, уçăмлă та ăнланмалла палăртма тăван чĕлхе пуянлăхне май пур таран ытларах пĕлни кирлĕ. Чĕлхери пин-пин сăмахран чи кирлине, калас шухăша тивĕçлĕ сăмаха, сăмах малашăвне суйласа илме пĕлмелле. Урокра илемлĕ пуплев çинче чарăнса тăратпăр. Илемлĕ (сăнарлă) пуплев шухăша тарăнрах та витĕмлĕрех палăртма пултарнине ачасене тĕслĕхсем илсе çирĕплетсе паратăп. Илемлĕ литература произведенийĕсене тишкеретпĕр. Тропсене аса илетпĕр. Сăнарлăх хатĕрĕсемпе усă курма вĕренетпĕр.

***2-мĕш тема. Практика ĕçĕ (1 сех.)***

Илемлĕх мелĕсене аса илсе çирĕплететпĕр. Пуплеве сăнарлă тăвакан илемлĕх мелĕсем йышлă. Вĕсенчен хăш- пĕрисем: сăпатлантару, танлаштару, эпитет, метафора, метонимии, синекдоха, гиперболăпа литота илемлĕ хайлавсенче тăтăш тĕл пулаççĕ. Ачасене хăйсен ĕçĕсенче сăнарлăх хатĕрĕсемпе усă курса пуплеве илемлĕ те витĕмлĕ тума хăнăхтаратăп.

***3-4- мĕш тема .Поэзи чĕлхи (2 сех.)***

Сăвăласа çырнă кирек епле хайлавăн та тĕп уйрăмлăхĕ– илемлĕх йĕрки, ритмпа рифма, урăхла каласан, сăвă чĕлхи пурри, Рифмăпа ритм çинче чарăнса тăратпăр. Рифма тĕсĕсене аса илетпĕр. Уçă сасăсен тата хупă сасăсен янăравлăхĕ (ассонанс, аллитераци) пирки калаçатпăр. Эпифора, анафора тĕслĕхĕсене илсе пăхатпăр. Сăвă виçине сыпăксен шучĕпе палăртаççĕ. Сыпăксем вара пĕр пусăмра пĕрлешсе карт тăваççĕ. Çыравçăсем ытларах силлабо-тоника хывăмпа усă кураççĕ. Вĕсем икĕ сыпăклă (хорей, ямб) тата виçĕ сыпăклă (дактиль, амфибрахии, анапест) пулаççĕ. Хайлавсене тишкерсе сăвă виçисене уйăрса илме хăнăхатпăр.

***5-6-мĕш тема. Пуплев фигурисем (2 сех.)***

Пуплев фигурисем: анафора, эпифора, хутламсем. Пĕр сăмаха е сăмах çаврăнăшне темиçе хут калани (рефрен) сăвăсенче час-час тĕл пулать. Сăвăсенчи параллелизм.

***7-мĕш тема. Сасă вылявĕ (1сех.)***

Чăваш сăвви-юрри шухăшĕпе те, илемлĕх мелĕсемпе те пуян.Ку шутра–уçă е хупă сасăсен янăравлăхĕ. Ассонанс тата аллитераци.

***8 -9-мĕш тема. Сăвă çырас ăсталăх (2сех.)***

Чăваш çыравçисен пултарулăхĕ. Лирика. Сăвă виçисем: силлабика (сыпăклă хывăм), тоника (пусăмлă хывăм), силлабо- тоника (сыпăклă- пусăмлă хывăм). Икĕ сыпăклă тата виçĕ сыпăклă сăвă виçисем. Тропсем. Фигурăсем. Сасă вылявĕ. Илемлĕх мелĕсемпе усă курса сăвă чĕлхине тытса пыма хăнăхатпăр. Сăвă çырма вĕренетпĕр.

***10 -мĕш тема. Литература геройĕ (1 сех.)***

Çыравçă хăй мĕн калас тенине сăнарсем урлă çитерме тăрăшать. Сăнарсăр илемлĕ хайлав пулма пултараймасть. Сăнар пуплевпе ĕç-хĕл урлă палăрать. Монолог, диалог, полилог. Литература геройне сăнаса пама вĕренетпĕр.

***11-мěш тема Лирика тěсěсем (1 сех.)***

Илемлĕ текст кĕвĕпе çемĕ тĕлĕшĕнчен йĕркеленсе çитет те шухăшпа туйăма пĕр çыхă туса лирика тĕсне уçăмла палăртма май парать. Лирика тĕсĕсем: философиллĕ лирика, гражданла лирика, çут çанталăк лирики, юрату лирики, суггестивлă лирика.

***12-13-мěш тема. Практика ěçě (2 сех.)***

Лирика. Лирика тĕсĕсем. Суйласа илнĕ лирика тĕсĕпе сăвă çыратпăр.

***14-мěш тема. Поэзи кaçě (1 сех.)***

Мастер-класс. Илемлĕ хайлав уйрăмлăхĕсене аса илетпĕр. Сăвăсене илемлĕ те палăртуллă вулатпăр.

***15-мěш тема. Пуплев тěрěслěхě (1 сех.)***

Хальхи чăваш литература чĕлхи тата унăн нормисем. Пуплев тасалăхĕ (диалектизмсенчен, варваризмсенчен, штамп сăмахсенчен,паразит сăмахсенчен хăтăлма вĕрентесси). Чăваш чĕлхинчи орфоэпи нормисем. Уçă сасăсемпе хупă сасăсене каласси. Грамматика формисемпе конструкцийĕсене суйласа илме вĕренетпĕр. Ачасен ĕçĕсене тишкерсе йăнăшсене уйăрма хăнăхатпăр.

***16-мěш тема. Кěнеке стилě (1 сех.)***

Стиль тĕсĕсем. Стиль мĕнлерех пуласси пуплев ситуацийĕнчен килет. Кулленхи калаçу стилĕ, илемлĕх стилĕ, наука стилĕ, ĕçлĕ стиль, публицистика стилĕ. Илемлĕх стилĕ кĕнеке стилĕн пĕр тĕсĕ. Унăн паллă уйрăмлăхĕ–сăнарлăх. Стиль уйрăмлăхĕсене тупса палăртатпăр. Уйăрса панă стильпе текст йĕркелетпĕр.

***17 –мěш тема. Эпика, лирика, драма хайлавěсем (1 сех.)***

Эпика, лирика, драма хайлавĕсен тĕп уйрăмлăхĕсем. Калану речĕ: кĕске калану, вăта калану, анлă калану. Лирика. Лиро- эпика. Текстпа ĕçлесе эпика, лирика, драма хайлавĕсен уйрăмлăхĕсене курма хăнăхатпăр.

***18- мěш тема. Текст тěсěсем (1 сех.)***

Текст тĕсĕсем: сăнлав, калав, ăслав. Хутăш текст. Текстсене тишкерсе вĕсен тĕсне уйăрса илме вĕренетпĕр. Текст тĕсĕсен уйрăмлăхĕсем çинче чарăнса тăратпăр.

***19-мěш тема. Практика ěçě (1 сех)***

Сăнлав сочиненийĕ. Сăнлав сочиненийĕн уйрăмлăхĕсене шута илсе хайлав çыратпăр.

***20- мěш тема. Ытарлă кулăш (1 сех.)***

Кулăш тĕрлĕ пулать. Юмор, сатира, сарказм. Аллегори. Мĕн вăл юптару пăхса тухатпăр. Ытарлăх çинче чарăнса тăратпăр ( гротеск, литота). Кулăш тĕсĕсене уйăрса илме вĕренетпĕр.

***21-мěш тема. Инсценировка (1 сех.)***

Инсценировка –сцена ҫинче кӑтартма йӗркеленӗ драма хайлавӗ. Ремарка ҫинче чарӑнса тӑратпӑр. Драма хайлавӗпе проза хайлавӗн уйрӑмлӑхӗсене палӑртатпӑр. Сценари. Инсценировка ҫырма вӗренетпӗр.

***22-мӗш тема. Пьеса (1сех.)***

Сцена ҫинче вылямалли хайлавсем: драма, комеди, трагеди. Пьеса– сцена ҫинче выляса кӑтартма ҫырнӑ хайлав. Конфликт. Драма тытӑмӗ: ӗҫ пуҫламӑшӗ, аталанӑвӗ, хӗрсе ҫитнӗ вӑхӑт, ӗҫ вӗҫленӗвӗ. Драма хайлавне тишкерсе тытӑмне тупса палӑртатпӑр.

***23-мӗш тема. Творчествӑллӑ ӗҫ (1 сех.)***

Пьеса тытӑмӗ: ӗҫ-пуҫ (действие, акт), ӳкерчӗк (акт), ҫӗнӗ курӑну (явлени). Ремарка. Драма тытӑмӗ. Шкул пурнӑҫӗ ҫинчен пысӑках мар пьеса ҫыратпӑр.

***24-мӗш тема. Урок-экскурси (1 сех.)***

Театрта спектакль пӑхатпӑр. Драматурги жанрӗсене уйӑрса илме хӑнӑхатпӑр.

***25- мӗш тема. Сӑнарлӑх (1 сех.)***

Унерлӗхе ӑслӑлӑхран уйӑрса тӑраканни– сӑнарлӑх. Ҫут ҫанталӑкӑн пӗр-пӗр вӑхӑтне е пӗр-пӗр япалана илемлӗх мелӗсемпе усӑ курса ҫырса кӑтартнине сӑнарлӑх теҫҫӗ. Искусство тӗсӗсем: пӗр никӗслисем, нумай никӗслисем. Сӑмах ӳнерне тишкеретпӗр. Сӑмах ӳнерӗ ыттисенчен анлӑрах, нумай енлӗрех.

***26-мӗш тема. Логика йӑнӑшӗсем (1 сех.)***

Логика йӑнӑшӗ вӑл — ҫыхӑнуллӑ текстӑн е уйрӑм предложенин пайӗсем шухӑш тӗлӗшӗнчен пӗр-пӗринпе килӗшсе тӑманни, пӗр-пӗрне хирӗҫлени. Сӑмахсене сӑлтавлӑх енчен ҫыхӑнтарма пӗлменни, ӑнлава ытлашши сарса яни, хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ сӑмахсемпе вырӑнлӑ усӑ курма пӗлменни. Текста редакцилесе логика йӑнӑшӗсене тупма вӗренетпӗр.

***27-мӗш тема. Сӑмах перекетлӗхӗ (1 сех.)***

Калаҫу та, ҫырулӑ пуплев те перекетлӗ пулмалла. Пуплевре ытлашши сӑмах е вырӑнсӑр сӑмахсем пулмалла мар. Пуплеве темӑран пӑрӑнмасӑр тытса пымалла. Тавтологи пулмалла мар. Пуплеве ытлашши илемлетессинчен те хӑтӑлмалла. Сӑмах хакне туйма вӗренсе ҫитме тӑрӑшӑпӑр.

***28-мӗш тема. Вӑйӑ-урок (1 сех.)***

Ларма. Халӑх йӑли-йӗркине асра тытса ӑша хывса хӑварма тӑрӑшатпӑр. Хамӑр пултарулӑха кӑтартатпӑр.

***29-мӗш тема. Поэзи пилӗкминутлӑхӗ (1 сех.)***

Практика занятийӗ. Мастер-класс. Ачасем хӑйсен сӑввисене палӑртуллӑ та илемлӗ вулаҫҫӗ.

***30-мӗш тема. Творчествӑллӑ ӗҫсене хӳтӗлени (1сех.)***

Ачасем хӑйсен хайлавӗсемпе паллаштараççӗ, вӗсене хӳтӗлеççӗ. Хайлавӑн темипе тӗп шухӑшне, жанрне,тытӑмӗпе сюжетне палӑртаççӗ. Сӑнарлӑ чӗлхе мелӗсем çинче чарӑнса тӑратпӑр.

### *31-мӗш тема. Рецензи (1 сех.)*

Çын ӗçне хаклама вӗренетпӗр. Темипе тӗп шухӑшне тупса палӑртатпӑр.Жанр хӑй евӗрлӗхӗ çинче чарӑнса тӑратпӑр. Хайлав тытӑмӗпе сюжетне йӗрлетпӗр.Сӑнар калӑплас ӑсталӑха хаклатпӑр. Авторӑн сӑнарлӑ чӗлхине тишкеретпӗр. Хайлавра çитменлӗхсем пулсан вӗсене палӑртса хӑваратпӑр. Ӑнӑçусем сунса пултарулӑха малалла аталантарма сӗнетпӗр.

### *32-33-мӗш тема. «Авангард» хаçатра хӑнара Урок-тӗл пулу .(2сех.)*

Публицистика жанрӗсем. Хаçат-журнал жанрӗсемпе паллашатпӑр. Заметка çырма вӗренетпӗр. Пӗр-пӗр çыравçӑн пултарулӑхӗпе паллашатпӑр. Çырас ӑсталӑха алла илме вӗренетпӗр.

### *34-мӗш тема. Сӑмахлӑх вӑл–самана сасси. 1 сех*

Унер тӗсӗсем. Илемлӗ литература–ӳнерӗн пӗр тӗсӗ. Унӑн тӗп материалӗ –сӑмах. Илемлӗх мелӗсем. Сӑмахлӑ культура обществӑри тӗрлӗ событисенчен уйрӑм аталанаймасть. Чӑваш сӑмахлӑхӗн аталану тапхӑрӗсем.

### *35-мӗш тема. Практика ӗçӗ. Урок-пӗтӗмлетӳ (1сех.)*

«Хунав» кружокӗн хаçатне пичете хатӗрлесе çитеретпӗр. Публицистика жанрӗсене аса илетпӗр. Зачет. Ачасем пултарулӑх тетрачӗсене хӳтӗлеççӗ. Хӑйсен хайлавӗсене хакласа пӗтӗмлетӳсем тӑваççӗ.

### *Литература*


1. Горшков А.Е. Сӑмах пултӑр уçӑмлӑ, шухӑш пултӑр витӗмлӗ.Шупашкар,1981.
2. Иванова Н.Г. Чӑваш литературине вӑтам шкулта вӗрентессин хӑш- пӗр ыйтӑвӗсем. Шупашкар, 2003.
3. Канюкова А.С. Чӑвашла тӗрӗс калаçар. Шупашкар, 1994.
4. Сергеев Л. П Сӑмах тӗнчи. Шупашкар, 1997.
5. Н.Г. Иванова, Ф.А. Матвеева, П.Н. Метин. Тӑван литература:5-мӗш класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки. Ш., 2005.
6. З.С. Антонова, Н.Г. Иванова. Тӑван литература:6-мӗш класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки. Ш., 2001.
7. З.С. Антонова, П.Н. Метин Тӑван литература:7-мӗш класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки. Ш. 2002.